***Салихова Анфиса Викторовна***
студентка
***Коротаева Лариса Валерьевна***
канд. филол. наук, доцент
Стерлитамакский филиал
ФГБОУ ВО «Башкирский государственный университет»
г. Стерлитамак, Республика Башкортостан

# ЧУВАШСКИЙ ФОЛЬКЛОР КАК СРЕДСТВО ФОРМИРОВАНИЯ НРАВСТВЕННЫХ ЦЕННОСТЕЙ

***Аннотация**: в статье рассматривается чувашский фольклор как средство нравственного воспитания. Помочь поставить молодое поколение на правильный путь – актуальный вопрос в настоящее время. Большое количество людей понимают, что для духовного возрождения общества недостаточно только знаний, полученных через традиционное обучение. Культура чувашского народа может влиять на характер человека.*

***Ключевые слова**: фольклор, чувашская песня, чувашский танец, музыкальные инструменты, воспитание.*

*Работа выполнена при финансовой поддержке РФФИ, проект №19–012–00498/20.*

# ЧĂВАШ ФОЛЬКЛОРĔ КĂМĂЛ-СИПЕТ ПУЯНЛĂХНЕ ЙĔРКЕЛЕМЕЛЛИ МЕСЛЕТ

***Аннотаци**:* хайлавра чăваш халăх сăмахлăхĕ кăмăл-сипет пуянлăхне йĕркелемелли меслет пулнине пăхса тухнă. Хальхи пăтранчăк саманара çамрăк ăрăва тĕрĕс утăм çине тăратасси çивĕч ыйту пулса тăрать. Нумай çын обществăна аталантарас тесе йăлана кĕнĕ вĕрентӳ урлă илнĕ пĕлӳ кăна çителĕксĕр пулнине лайăх ăнланать. Чăваш халăх культури çыннăн кăмăл-туйăмне витĕм кӳме пултарать.

***Тĕрев сăмахĕсем:*** фольклор, чăваш юрри, чăваш ташши, музыка инструменчĕсем, ăс пани.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Чăваш халăхĕн виçĕ пин çулти чыслă аваллăхĕ мухтава тивĕçлĕ. Çак халăх ĕмĕр-ĕмĕр тар юхтарса ĕçлесе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, пахча, вăрман ӳстерсе пурăннă. Мĕнрен килнĕ-ха чăваш халăхĕн сĕм аваллăхран пыракан пархатарĕ? Паллах, авалтан пыракан, ăруран ăрăва куçакан йăла-йĕркесенчен. Несĕлсем пирĕн валли пуян еткер хăварнă. Пирĕн çак еткерпе усă курма пĕлмелле.

Хальхи пăтранчăк саманара çамрăк ăрăва тĕрĕс утăм çине тăратасси çивĕч тăракан ыйту шутланать. Çак ĕçе пурнăçлама чăваш халăх юррисен вăй-хăвачĕ пулăшать.

Халăх самахлăхĕ шутне тăван халăхăн илемлĕ сăмах пултарулăхĕпе çырулла сăмахлăхĕ кĕреççĕ. Вĕсем çамрăк ăрăва пăхса ӳстерес тата вĕрентес тĕллевсемпе килĕшсе тăраççĕ. Ача-пăча валли хывнă е çырнă хайлавсем вĕт-шакăра ăслă-тăнлă, ырă та тӳрĕ кăмăллă пулма, ĕçе хăнăхма, ваттисене хисеплеме, тăван халăхпа çĕр-шыва юратма, тăван чĕлхе илемне туйма вĕрентеççĕ. Чăваш Республикин искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А.Г. Григорьев профессор çапла каланă: «Халăх йăли-йĕрки – хăй пĕр университет». Халăх сăмахлăхĕнче ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Этемĕн пурнăçĕ ĕмĕртен фольклорпа çыхăнни ача чунне поэзилле туйăм хывса пынă. Халăх поэзийĕн паха тĕслĕхĕсем илемлĕхе ăнланма, юратма пулăшаççĕ [1]. Чăваш сăмахлăхĕн аталанăвĕ ĕлĕкрен халăхăн йăла пурнăçĕпе çыхăннă. Фольклор çыннăн ĕçлĕ пурнăçĕпе, ĕçри хусканăвĕсемпе, кулленхи йăлисемпе мĕнпур пулас-иртес ĕç-пуçпа пачах уйрăлми, тачă çыхăнса тăнă [2]. Çапла вара, чăваш сăмахлăхĕ – чăваш халăхĕн нихçан иксĕлми ăслăлăх тĕслĕхĕсем, хӳхĕм хайлавĕсем. Халăх ăс-тăнĕн, фантазийĕн пуян çăлкуçĕ вĕсене упрама çĕнĕрен те çĕнĕ тĕслĕхсем хывма хăват парать.[3]

Юрă – халăхĕн пысăк пуянлăхĕ, сăмахлăхĕн чи вăйлă аталаннă, анлă сарăлнă тĕсĕ. Ахальтен мар ваттисем: «Юрăсăр мĕнле пурăнăн, пурнăç çук, савăнăç çук», – тенĕ. Чăваш халăхĕ мĕн ĕлĕкрен, мĕн авалтан юрра юратнă. Кашни ялăн, кашни урамăн, кашни çыннăн хăйĕн юрри пулнă. Тырă акать - юрлать чăваш, пуçтарать – юрлать чăваш, канма ларать – юрлать, ачине сăпкара


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

сиктерет – юрлать. Чылайрах чăваш юррисене ушкăнпа юрланă. Сăпка юррипе хĕр йĕррисене пĕччен юрланă. Хăш-пĕр ача-пăча такмакĕсене уйрăмах хĕрачасем е арçын ачасем юрланă. Чăваш халăх йăлипе кĕçĕннисем аслисем çинчен юрланă, ватăсем – кĕлĕ юррисем.

«Халăх юрри – халăх пуянлăхĕ», тесе калатпăр. Çак тупрана чăваш çынни пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарса, пĕр чĕптĕмне те çухатмасăр упраса пурăнать. «Халăх юрри – чун уççи», – тенĕ ваттисем [4]. Тĕслĕхрен, Пушкăрт республикинчи Пелепей районне кĕрекен Çĕнĕ Сименкке ялĕнче çырса илнĕ туй юррин йĕркисемпе паллашар. Юрă тарăн шухăшлă, янравлă пулни курăнать.

Туй, туй тесе
Çĕр çĕмĕрсе килтĕмĕр,
Пурнас йытта вĕлерсе
Праппан туса килтĕмĕр.
Шурă тутăра тĕрлеме
Сар çип нумай кирлĕ мар,
Яш ĕмĕре иртторме
Вăхăт нумай кирлĕ мар.
Ай, апай, ват апай,
Кин кĕртиччен кин кĕртес.
Кин кĕртсен – кил тулать,
Сăпка çаксан – пÿрт тулать.
Пирĕн апайăн икĕ шăл,
Пĕри çăкăр çимелли.
Тепри пирĕн кине çимелли.

Чăтаканни чăтаять, чăтайманни чăтаймасть (2020 ç. ПР, Пелепей р-чи Çĕнĕ Сименкке ялĕнче А.Б. Савринаран (1937 ç.ç.) А.В. Салихова çырса илнĕ).

Халăх юррисене ăçта, хăçан тата мĕнле сăлтавпа юрланине кура тĕрлĕ ушкăнсене уйăраççĕ. Ĕç юррисем. Чăвашсен авалтан çĕр çинче суха туса, тырă акса ĕçлесе пурăннă май, юррисем те çĕр ĕçĕпе çыхăннă. Вĕсенчен пĕрисем ĕç юхăмĕпе çыхăннă (кĕпер тăвакан, сăвай, чăпта, авăн çапакансен юррисем),


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

теприсем – ĕçе йыхăраканнисем (ниме юррисем), виççĕмĕшĕсем – тĕрлĕ ĕç йĕркине сăнлаканнисем (сӳс тыллакансен, пир çапакансен, утă çулакансен, кантăр татакансен т. ыт. те), ĕçе хисеплесе-хакласа юрланисем. Йăла-йĕрке юррисем. Авалхи асамлă-ăрăмлă, савăнăçлă е хурлăхлă йăласемпе çыханнă.

Чăваш юррисене итлесе ытти халăхсем те тĕлĕннĕ. Акă мĕн каланă чăвашсен пурнăçне тĕпчекенĕ, вырăс хĕрарăмĕ Александра Фукс 1840 çулта «Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии» ятлă ал çырăвĕнче: «Чăваш тĕлĕнмелле талантлă. Хирпе пырать – хир çинчен юрлать, вăрманпа пырать – вăрман çинчен юрлать».[5]

Мĕн ĕлĕкрен чăваш халăхе ташша пысăк вырăна хунă, тĕрлĕ инструментпа каласа юрла-юрла картана тăрса ташланă. Ватăсен, çамрăксен, хĕрпе-каччăсен уйрăм ташшисем те пулнă. Ташăсем пĕччен, иккĕллĕ, виççĕллĕ, тăваттăллă, пысăк ушкăнпа ташламаллисем пур. Халăх ташшинче арçынсемпе хĕрарăмсем пĕр-пĕрне лекмелле пулман. Вăйă картинче кăна çамрăксем пĕр-пĕрне аларан тытса утнă. Пĕр-пĕрне ыталани, çупăрлани пысăк намăс шутланнă, хĕрарăма хисеплеменнине пĕлтернĕ. Хăрсем ташланă чух акăш пек шуса кăна çӳренĕ, сăпайлăскерсем аллисене нихăçан та куçран çӳлелле çĕклемен. Арçынсем вара хавахаланса хăвăрт та çăмăллăн хускалнă. Пĕтĕмлетсе каласан, чăваш ташши тирпейлĕхе, сăпайлăха, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентет.

Чăвашсен музыка инструменчĕсем. Кĕвĕ-юрă культури пуян пулнăран чăвашсем тĕрлĕ инструмент ăсталанă. Несĕлĕмĕрсен йăли-йĕркине питĕ лайăх пĕлнĕ Н.В. Никольский профессор çапла çырнă: «Чăвашсен инструментпа калакан музыки ытти халăхăннинчен чылай пуянрах тата тĕрлĕ енлĕ…» [6]. К.С. Милькович та çакнах çирĕплетнĕ, чăвашсем тĕрлĕ музыка хатĕрĕпе, оркестр майлă калама юратаççĕ тенĕ [7]. Истори ăслăлăхĕсен докторĕ В.Д. Димитриев хăйĕн «Чувашские исторические предания» кĕнекинче 1770 çулхи документпа паллаштарнă. Унта çапла каланă: «Вĕсен кĕсле каламасăр нимĕнле уяв та иртмест… Хăйсен тытăмĕпе чăвашсем кĕвĕ-çемме питĕ юратаççĕ, çавăнпа кашни çуртра тенĕ пекех кĕсле тытаççĕ». Çапла вара, чăваш халăх музыка хатĕрĕсене тытăмĕпе сасă пулăвĕн мелне кура тăвата


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

ушкăна пайлатпăр: хĕлĕхлисем: *сĕркĕчлисем* тата *туртăçлисем*; вĕркĕчлисем: *чĕлĕхлисем, шăхăртмаллисем, шăхрансем*; çурхахлисем: *çапмаллисем, чĕрпĕнкĕлли* [8]. Инструмент сассисене эпир чăваш концерчĕсенче нумай илтнĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, чăваш халăх фольклорĕпе усă курса çамрăксен кăмалсипетне çирĕплетме пулать. Чăваш халăх фольклорĕ пирĕн халăх йăла-йĕркине манманнине, хамăр несĕлсене сума сунине, пирĕн культура пуррине, вăл аталаннине, çынсем чунĕсемпе хытса ларманнине, çут çанталăка хисепленине, ăна ăнланнине кăтартать. Эппин эпир, чăвашлăха упракансем, çамрăк ăрăвăн пурнăç никĕсне хывса малалла аталантаратпăр.

***Список литературы***

1. Ильгачева Р.И. Чувашские народные песни для детей: Методическое пособие для классной и внеклассной работы. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2008. – 95 с.

2. Кондратьев М.Г. Народное музыкальное искусство Чувашии» // НИИ язык, литературы, истории и экономики при Совете Министров Чувашской ССР. – Чебоксары, 1991.

3. Милькович К.С. К вопросу о происхождении чуваш и их языка // Егоров В.Г. К вопросу о происхождении чуваш и их языка // Записки Чувашского НИИЯЛИ при СМ ЧувАССР. – Чебоксары, 1953. – Вып. 7.

4. Димитриев В.Д. Н. В. Никольский – ученый, педагог, общественный деятель: учеб. пособ. / В. Д. Димитриев. – Чебоксары: Изд–во ЧГУ, 2002. – 102 с.

5. Сидорова Е.С. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V том. Вак жанрсем. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд.-ви, 1984. – 352 с.

6. Степанова Н.И. Чăваш ача-пăча самахлахĕ: программа. – Шупашкар: Чăваш патш. пед. ун-чĕ, 2002. – 10 с.

7. Чернов В.С. Чувашские народные музыкальные инструменты. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2008. – 174 с.

8. Фукс А. Записки Александры Фукс о чувашах черемисах Казанской губернии. – Казань, 1840. – 329 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)